Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРŸШĔН

Юнкун
2007 ç.,юпа, 31

87
/9004/№

Хаçат 1932 çултанпа тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

# ХИСЕП ТЕ ЧЫС СИРЕ, ЯЛ ХУÇАЛĂХ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСĔН ТАТА ЯЛĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире ял хуçалăхĕн тата тирпейлекен промышленноçăн ĕçченĕн уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Эсир хăвăр ĕçе чунран парăннă, сирĕн ĕç тата хăвăра шеллемесĕр вăй хуни хисепе тивĕç. Паян эсир тăрăшнипе экономикăн аграри секторĕнче ырă улшăнусем пулса иртеççĕ.

Республикăн ял хуçалăхĕ пĕр тикĕс аталанать – выльăх шучĕ ÿссе пырать, çĕнĕ предприятисем йĕркеленеççĕ, ял тăрăхĕсенче ял хуçалăх кооперативĕсем ĕçлеççĕ. Чăваш Ен çак отрасльте туса илекен продукци тĕлĕшпе Раççейри вăтам кăтартусенчен иртет.

Апат-çимĕçпе тирпейлекен промышленноçра пахалăха ÿстерес тата туса илекен продукцин ассортиментне пысăклатас, техникăна çĕнетес, çĕнĕ технологисемпе тата пĕтĕм тĕнчери пахалăх стандарчĕсемпе усă курма пуçлас тĕлĕшпе тимлĕ тăрăшаççĕ.

Республикăра «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проекчĕ ăнăçлă пурнăçланса пырать. Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерстви хак панă тăрăх, Чăваш Ен уйрăм çынсен хуçалăхĕсем валли паракан çăмăллатнă кредитсем илессипе лидер шутланать. Наци проектне пурнăçлама республикăри хушма хуçалăх тытакан 25 пин çын хутшăнать. Çакă ял хуçалăхне пĕр тикĕс аталантарас тата ял çыннин пурнăç шайне лайăхлатас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Отрасль ветеранĕсене тата ĕçченĕсене кунсерен ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕшĕн, хавхаланушăн, тивĕçе туйнăшăн тата тăван çĕре юратнăшăн тав тăватăп.

Çирĕп сывлăх, ĕçре çитĕнÿсем тума телей тата ырлăх сунатăп.

***Чăваш Республикин Президенчĕ***
***Н. ФЕДОРОВ.***

ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ! АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Аграри секторĕ – районăн экономика пурнăçĕн чи пысăк пайĕ. Шăпах сирĕн – тыр-пул çитĕнтерекенсен, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен, продукци тирпейлекен промышленноçăн ĕçченĕсен – тăрăшуллă ĕçĕре пула районта пурăнакансене апат-çимĕçпе тивĕçтерсе тăратпăр.

Эсир пурăнакан ялсенче халăх йăли-йĕркине тытса пыраççĕ, ăс-хакăл пуянлăхне упраççĕ. Кунта ял хуçалăх ĕçне парăннă тата ĕçлеме пĕлекен, нимĕнле йывăрлăхран хăраман çынсем пурăнаççĕ.

Паянхи кун ял умĕнче çĕнĕ тĕллевсем тăраççĕ, вĕсене эпир халăхпа влаçăн пĕрлехи тăрăшулăхĕпе кăна татса пама пултаратпăр.

Çĕр ĕçченĕсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем умĕнче пуç таятăп тата вĕсене тав сăмахĕ калатăп. Сире, сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, çăмăл мар ĕçĕрте ÿсĕмсем, телей тата ытлăх-çитлĕх сунатăп.

***Йĕпреç районĕн пуçлăхĕ***
***А. ПЕТРОВ.***



Районти чи хиселлĕ механизатор Вениамин Ивашкин тăван колхоз уй-хирне 49 çул сухалать. Вăл пенсие тухни 10 çул ытла ĕнтĕ, çапах та «тимĕр лашипе» сывпуллашма васкамасть. Унăн çамрăксене памалли опычĕ питĕ пуян. Вениамин Семенович лайăх ĕçленĕшĕн илнĕ наградăсен шутне тахçанах маннă темелле. Ăна Ленин, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе тата тĕрлĕ медальсемпе чыс тунă.

Кĕрхи çĕртме тăвассипе районти механизаторсем хушшинче ирттернĕ ĕç ăмăртăвĕнче Ильич ячĕллĕ колхоз ветеранĕ 1-мĕш вырăна тивĕçнĕ, вăл шанса панă ДТ-75 тракторпа пĕр условнăй техника пуçне пуринчен ытларах ĕç пурнăçланă.

**ŸКЕРЧĔКРЕ:** *Ильич ячĕллĕ колхоз механизаторĕ В. С. Ивашкин хăйĕн çулĕсене пăхмасăр ырми-канми ĕçлет, хăйĕн хыççăн тÿп-тÿрĕ суха касси хăварса пулас тыр-пул никĕсне хывать.*

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнÿкерчĕкĕ.***

**Çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те канăçсăр шухăшсенчен хăтăлаймасть ял çынни. Çакна вăл йĕркеллĕ пулăм вырăннех хурать, ăнакăна пурнăçлама тепĕр чухне вăхăчĕ сахалрах пулсассăн та.**

**Çапла, ял хуçалăх производствинче вăй хуракансемшĕн халĕ чăннипех яваплă тапхăр: вĕсем Çĕнĕ çул пуçламăшĕнче панă сăмах ĕçпе мĕнлерех çирĕпленнине пăхса тухаççĕ, пĕтĕмлетÿсем тăваççĕ, пуласлăх çула хывма тĕллевсем палăртаççĕ. Эпир те çавăн пек пĕрлехи пухăва кăçалхи чÿк уйăхĕн 2-мĕшĕнче иртерес терĕмĕр, унта аграри тытăмĕнчи предприятисенче хăйсен ырă тĕслĕхĕпе палăрнă хуçалăхсемпе кооперативсене тата уйрăм ĕçченсене савăнăçлă лару-тăрура чыслăпăр.**

## ЯЛ ÇЫННИ ТĂВАЛЛАХ ТАЛПĂНАТЬ

Ялсене тăтăшах тухса çÿреме тивнĕ май çакна асăрхатăп. Юлашки вăхăтра тыр-пул ăстисемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансен, ытти професси çыннисен кăмăл-туйăм унччанхинчен çĕкленÿллĕрех те савăкрах. Патшалăх ял çынни енне «çаврăнса» тăнă хыççăн чуна савăнтаракан ырă улшăнусем пулса иртеççĕ. Апла тăк, ял пурăнать, шанчăклăн та мал ĕмĕтлĕн пуласлăх çулĕпе тăвалла талпăнать. Çакна пирĕн тăрăхра аграри тытăмĕнчи хăшпĕр çитĕнÿ те уçăмлăн çирĕплетет. Акă, тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем йышăнакан лаптăка кăçал пĕлтĕрхинчен палăрмаллах ÿстертĕмĕр. 8 пин гектар патне çитертĕмĕр. «Иккĕмĕш çăкăра» та иртнĕ çулхинчен

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

## *Н. ФЕДОРОВ:* «РАÇÇЕЙ ПРЕЗИДЕНЧĔ РАÇÇЕЙПЕ УНĂН ХАЛĂХĔН ШĂПИН ЯВАПЛĂХНЕ ХĂЙ ÇИНЕ ИЛЧĔ»

**Юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче Чăваш Ен Президенчĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» /«Единая Россия»/политика партийĕн Аслă Канашĕн членĕ Николай Федоров, Раççей Патшалăх Думин Пĕтĕм тĕнчери халăхсен хушшинчи ĕçсен комитечĕн ертÿçи, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Тĕп Канашĕн Президиумĕн секретарĕн çумĕ Константин Косачев «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партипе пĕр майлисен форумĕн ĕçне хутшăнчĕç.**

Форумра çакна палăртнă: çĕршывра политикăра, экономикăра, ăс-хакăллăхра палăрнă кризиса çĕнтернĕ ĕнтĕ. Ача çураласси ÿсет, граждансен ĕç укçийĕсемпе пенсийĕсем тата тупăшĕсем хăпараççĕ. Раççей экономики юлашки çичĕ çул хушшинче 60 процент ÿснĕ. Çынсенчен ытларахăшĕ çĕршывăн экономика аталанăвĕн лайăх кăтартăвĕсене хăйсенче туйса тăраççĕ. Чăваш Енре промышленность производствин ÿсĕмĕ, вĕренĕве, сывлăха сыхлас ĕçе, культурăна çĕнетсе лайăхлатассин хăвăртлăхĕ Раççейри кăтартусенчен пысăкрах – пирĕн республикăна килсен Владимир Путин Президент çавна палăртрĕ. Çаксем пĕтĕмпех «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти хастар хутшăннипе пулса пыраççĕ.

Сăмах та çук, Раççей вăй илсе çĕнелет. Çĕршыв политика тата экономика витĕмĕн, культурăпа кăмăл-сипет туртăмĕн, çĕршыври пур граждансен пурнăçĕн çĕнĕ пахалăхне çирĕплетекен тĕнчери центрсенчен пĕри пулса тăма май паракан çула тупма пултарчĕ. Шăпах çав çул-йĕре «Путин планĕсем» тетпĕр. Ăна пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтра вун-вун çул хушшинче пуçтарăннă чи кăткăс та чи çивĕч ыйтусене халех татса пама май килчĕ.

Патăрьел районĕнчи «Красное знамя» колхоз ертÿçи Петр Никифоров, уйрăммăн илсен, хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: «Чăваш Ен Правительстви, Николай Васильевич Федоров Президент ялти халăх хуларинчен япăхрах ан пурăнтăр тесе мĕнлерех тăрăшнине хам куратăп. Президент хăй те ялта çуралнă, вăл чăваш ялĕсĕр, наци сăпкисĕр наци хăй пулма пултараймассине ăнланать. Хиселлĕ Николай Васильевич, ял çыннисем сире, тен, вунă, çĕр хут тав сăмахĕ каланă пулĕ. Апла пулсассăн та эпĕ сире ялсене газ кĕртнĕшĕн, çĕнĕ çул-йĕршĕн, çĕнĕ больницăсемшĕн, çемье врачĕсен офисĕсемшĕн, шкулсемпе шыв пăрăхĕсемшĕн, тĕслĕх библиотекăсемшĕн тепĕр хут тав тăвасшăн.

Патăрьел районĕнче паян пур яла газ кĕртнĕ, тĕпрен илсен, пур яла та асфальт сарса çитернĕ. Халĕ халăха таса шывпа тивĕçтерес ĕç пырать, физкультурăпа спорт комплексĕ, ытти социаллă объектсем çĕкленеççĕ. Çамрăксем ялалла туртăнма тытăнчĕç. Пирĕн çынсем еплерех керменсем çĕклеççĕ, хăш-пĕр кунсенче Патăрьелĕнче, пысăк хулари пекех, автомобильсен пробкине курма пулать. Шкулта вĕренекен кашни ачанах мобильник пур – аплатăк, лайăхрах пурăнма тытăнтăмăр! Çемье врачĕн офисĕсем йышланаççĕ, пирĕн пата лайăх врач килсе, газ, шыв, шкул, Интернет пур ялтах юласси пĕрре те иккĕлентермест».

Кунпа пĕрлех тухса калаçакансем культура, демографи тытăмĕнчи çивĕч, халех татса пама кирлĕ ыйтусене хускатнă.

Константин Косачев хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: «Эпир чăннипех те аслă çĕршывра пурăнатпăр, çав çĕршыва хаклаççĕ тата хиселлеççĕ. Эпир – аслă традицисене, аслă историе малалла тăсаканĕсем. Ку вăл – эпир Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тунă çĕнтерÿ, ăна никама та памастпăр. Ку вăл – космоса пуринчен малтан парăнтарнă пирĕн Гагарин. Халĕ пирĕн, XXI ĕмĕр пуçламăшĕнче пурăнакансен, юратнă Тăван çĕршывăн чапне хушса пыма историллĕ майсем пур».

Япăххине йышлăн илсе килнĕ çулсем, пирĕн пурнăç лайăх еннелле улшăнмасси пирки шухăшланă вăхăтсем хыçра ĕнтĕ. Халăхсен хушшинчи ĕçсен Комитечĕн ертÿçи юлашки уйăхсенче пулса иртнĕ хăш-пĕр ĕçсем çинчен аса илтернĕ: «Эпир Олимп вăййисене Сочире ирттерме тивĕçме пултартăмăр. Этемлĕх историйĕнче пĕрремĕш хут Çурçĕр полюсĕн аялти пайĕнче Раççей ялавĕ вĕлкĕшме пуçларĕ. Эпир акăлчансене футболла выляса 2:1 шутпа çĕнтертĕмĕр».

Çавна май Константин Косачев çакна палăртнă: «Çакăн пек çĕршывпа тивĕçлипех мухтанмалла. Çавăн пек çĕршыва юратмасăр тăма май çук. Ку вăл пирĕн аслă Тăван çĕршыв, çĕршыв мăнаçлăхне вара Раççей Федерацийĕн Президенчĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» списокне ертсе пыма килĕшнĕ Владимир Владимирович Путин тепĕр хут таварчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров вăл Путин командинчен. Пурте эпир, парти членĕсем, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» майлисем, çитес суйлавра «Пĕрлĕхлĕ Раççейшĕн» хăйсен сассине параканĕсем – эпир пурте çав команда «салтакĕсем».

«Путин планĕ» – нумай çуллăха, вуншар çуллăха туса хатĕрленĕ план, – тенĕ вăл. – Эпир çакна пĕлетпĕр, тепĕр 15 çултан çĕршыври халăх чакма пăрахĕ, эпир каллех наци пек аталанма пуçлăпăр. Тепĕр виçĕ çултан çĕршыври вăтам ĕç укçи 25 пин тенке çитесси те пирĕншĕн паллă. Çитес çул вĕсĕнчен Чăваш Енре кашни ял хытарнă çулпа çыхăнассине те эпир пĕлетпĕр. Акă мĕнле вăл, Путин – Федоров команди».

Форумра Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров тухса калаçнă. Республика ертÿçи хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: парти списокне ертсе пыма килĕшсе, Раççей Президенчĕ Владимир Путин Раççей аталанăвĕн çирĕплĕхĕшĕн, Раççей прогресĕн çирĕплĕхĕшĕн хăй çине историллĕ яваплăх илчĕ. «Раççей Президенчĕ Раççейпе унăн халăхĕн шăпишĕн пысăк саспаллилĕ яваплăха хăй çине илчĕ», – тенĕ Николай Федоров. Вăл çĕнелекен Раççей паян хăвăрт аталанса пынине палăртнă. Çавăнпа пĕрлех вăл çĕршывра пулса иртекен ырă улшăнусене сыхласа хăвармалли шанчăклă вăй хальлĕхе çуккине те палăртса хăварнă. Акă мĕншĕн Раççей шăпи раштавăн 2-мĕшĕнче иртекен суйлавран нумай килет.

Форумра «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти майлисем Чăваш Республикинче пурăнакансене Чĕнсе калани йышăннă.

***Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн пресс-службы.***

## ПИРĔН ЕНТЕШ – ЕВРОПА ЧЕМПИОНĔ

2007 çулхи юпа уйăхĕн 11-14-мĕшĕсенче Нева çинчи хулара кире пуканĕ йăтас енĕпе Европа чемпионачĕ пулса иртнĕ. Континентри чи вăйлă спортсменсемпе пĕрле Чăваш Республикин ывăл-хĕрĕсем те вăй виçме помост çине тухрĕç. Тĕслĕхрен, Пучинкере çуралса ӳснĕ Чăваш ял хуçалăх академийĕн студентки Алина Иванова ентешĕмĕр çак чаплă ăмăртура кĕмĕл медаль çĕнсе илчĕ.

Пирĕн тепĕр ентешĕн ăмăртăвĕ те ăнăçлă пулса пынă. Санкт-Петербургри аграри университечĕн выпускникĕ, халĕ П. Лесгафт ячĕллĕ Пĕтĕм Раççейри физкультурăпа спорт академийĕн студенчĕ, Владимир Петров спорт мастерĕ хăйпе пĕр пек виçеллисен ушкăнĕнче тупăшса пĕрремĕш хут Европа чемпионачĕн çĕнтерӳçи пулса тăчĕ. Пучинке каччине çитĕнӳ тунă ятпа чунтан саламлатпăр.

## КАНАШЛУ ПУЛСА ИРТНĔ

Юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче «Красный партизан» колхоз территорийĕнче районти ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу пуçланас умĕн ертӳçĕсем хуçалăхри çĕнĕ KOS-3B тăпра хатĕрлекен агрегатпа паллашнă. Хуçалăхри Николай Степанов механизатор МТЗ-1221 тракторпа асăннă агрегата çаклатса пĕр сменăра 15 га çинче кĕрхи çĕртме тунă. «Красный партизан» колхозра пурĕ 600 гектар çинче кĕрхи суха ĕçĕсене вĕçленĕ.

Канашлăва район пуçлăхĕ А. И. Петров хутшăннă. Вăл канашлăва килнĕ ертӳçĕсемпе тĕл пулнă, умри тĕллевсемпе паллаштарнă. 2008 çулта Республика кунне кĕтсе илнĕ май, Йĕпреç районĕнче те пысăк мероприятисем пулса иртмелле. Ялти предприятисен ертӳçисем çак уява хатĕрленсе пурнăçламалли ĕçсене те сӳтсе явнă.

# Постановление главы Ибресинского района

### О выделении мест для размещения предвыборных агитационных материалов по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации

В соответствии со статьей 54 Федерального Закона от 26.06.2002 г. «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и статьей 61 Федерального закона № 51-ФЗ от 18.05.2005 г. «О выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации» и на основе соглашения между главой Ибресинского района и главами сельских, городских поселений Ибресинского района, П О С Т А Н О В Л Я Ю:

1. Выделить места для размещения предвыборных агитационных материалов по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации на территории Ибресинского района согласно приложению.

2. Контроль за выполнением постановления возложить на Николаева Э. С. – управляющего делами администрации Ибресинского района.

Глава Ибресинского района
А. И. ПЕТРОВ.

п. Ибреси, 18 октября 2007 года, № 644.

*Приложение*
*главы Ибресинского района от*

### Перечень мест для размещения предвыборных агитационных по выборам депутатов Государственной Думы Ф Собрания Российской Федерации

| № п.п | Участки | Места |
|---|---|---|
| 1 | Ибреси | Щит на территории «Ярмарки»<br>Щит возле д. №25 по ул. Энгельса |
| 2 | Ибреси | Щит возле «Аптека №39»<br>Рекламные щиты возле центральной библио |
| 3 | Ибреси | Щит возле магазина «Гастроном»<br>Щит возле магазина «Шанхай» |
| 4 | Ибреси | Щит возле магазина «Елена»<br>Щит возле магазина по ул. Комарова |
| 5 | Буинск | Щит перед зданием Дома культуры<br>Щит перед конторой ООО «Нарат» |
| 6 | Айбечи | Щит в здании правления СХПК им. Калинина |
| 7 | Андреевка | Щит на здании магазина Ибресинского райпо |
| 8 | Сюрбеевка | Щит на здании магазина Ибресинского райп ка |
| 9 | Березовка | Щит возле здания Березовского отделения с |
| 10 | Огонек | Щит на здании магазина Ибресинского райпо |
| 11 | Большие Абакасы | Щит на здании магазина ТПС в д. Большие А |
| 12 | Нижние Абакасы | Щит у правления колхоза «Путиловка» |
| 13 | Бугуян | Щит на здании магазина Ибресинского райпо |
| 14 | Климово | Щит у склада магазина Ибресинского райпо |
| 15 | Тойси-Паразуси | Щит у Тойсипаразусинского СДК |
| 16 | Андрюшево | Щит у Андрюшевского СДК |
| 17 | Малые Кармалы | Щит у сельской библиотеки с. Малые Карма ты |



# ЧИ ЛАЙĂХ МЕДИЦИНА СЕСТРИ

**Вăл чăннипех те пысăк çитĕнӳ турĕ. Халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен республикăри патшалăх учрежденийĕсенче вăй хуракан медицина ĕçченĕсен хушшинче иртнĕ республика шайĕнчи смотр-конкурс программинчи тĕп задание «питĕ лайăх» паллăлăх пурнăçласа, ытти конкурсантсене кая хăварса, малти вырăна тухрĕ. Çакă ăна конкурсра çĕнтерме, «Чи лайăх медицина сестри» ята илме пулăшрĕ. Юна венăран эмел ямалли системăна пĕр йăнăшсăр тата кĕске вăхăтра пуçтарма пултарнипе вăл çĕнтерӳçĕ ятне сыхласа хăварма кăна мар, унпа пĕрлех Йĕпреçри психоневрологи интерначĕн ятне çĕклеме те пултарчĕ.**

19 çул каялла, Канашри медицина училищине пĕтернĕ хыççăн, Маргарита Наташкина çамрăк специалист Йĕпреçри психоневрологи интернатне ĕçлеме килнĕ. Унтанпах çак учреждение вăй хурать. Иртнĕ кĕçнерникун, акă, Муркаш районĕнчи Йӳçкассинчи ватă çынсемпе инвалидсен çуртĕнче йĕркелесе иртнĕ республика шайĕнчи конкурса хутшăнчĕ, хăйĕн профессиалулăхне кăтартса пачĕ, çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕ. Хăй кун пирки сăпайлăн кăна акă мĕн калать:

– Пĕччен тунă çĕнтерӳ мар ку, – тет, – ку ушкăнпа тунă çитĕнӳ. Пирĕн коллективăн туслăхĕ, пĕр-пĕрне ăнланса пулăшу пама пултарни пулăшрĕ пире.

Чăн та, Маргарита Михайловнăна конкурсра пулăшса пыракансем Вера Яковлева, Елена Полуэктова тата Елена Онегина медсестрасем хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех турĕç: ушкăн ятне те шухăшласа тупрĕç – çынсемшĕн хăйĕн чĕрине кăкăртан туртса кăларнă легендăри Данко ятне пачĕç ăна, эмблемине те ӳкерчĕç, илемлĕ пултарулăх номерĕсене те хатĕрлерĕç.

Йĕпреçсем хăйсен ятне çĕре ӳкермерĕç, конкурс заданийĕсене çăмăллăнах парăнтарса пычĕç. Чи йывăр тĕрĕслевсенче вара Маргарита Наташкина медсестран пĕччен «кĕрешме» тиврĕ. Анчах вăл пĕчченлĕхе пĕрре те туймарĕ, хыçра – шанчăклă тĕрек – пĕрле ĕçлекен юлташсем.

Жюри конкурсантсен ĕçри пултарулăхне «çивĕч куçсемпе» пăхса тĕплĕн пахаларĕ, вăл нимĕнле йăнăша та асăрхамасăр хăвармасть. Пирĕн Маргарита Михайловна вара çухалса каймарĕ, сасартăк чирлесе ӳкнĕ çынна диагноз лартассипе те, ăна сиплев процедурисем палăртассипе те ыттисенчен маттуртарах пулчĕ. Тен, мĕнле те пулин вăрттăнлăх пытарăнса тăрать çак çитĕнӳсен хыçĕнче?

– Нимĕнле вăрттăнлăх та çук, – тет Маргарита, – ятарласа хатĕрленсе те кайман. Эпĕ хамăн ĕç вырăнĕнче куллен мĕн тунине çеç жюри умĕнче кăтартса патăм. Пĕтĕмпех пĕлекен япаласем пулчĕç, хăнăхнă ĕç. Хумханни те таçта кайса çухалчĕ.

Пирĕн медсестра хăйне хăюллă тытнă, сумлă жюри умĕнче укол тунă чухне те унăн аллисем чĕтремен. Маттур, Маргарита!

Унăн професси ăсталăхне пысăка хурса хакланă ăна, çак конкурса çĕнтерӳ туптанăскере, «Чи лайăх медицина сестри» ят парса чыс тунă. Çакăн çинчен пĕлтерекен диплома вăл Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн Нина Суслонован аллинчен илнĕ. Дипломпа пĕрлех хаклă парне – кухньăра усă курмалли комбайн тухнă ăна.

Иккĕмĕш вырăна республикăри ветерансемпе инвалидсен реабилитаци центрĕн медицина сестри йышăннă, виççĕмĕшне иккĕн – Йӳçкассинчи ветерансен çурчĕн тата Патăрьел районĕнчи Турханти психоневрологи интерначĕн медсестрисем тивĕç пулнă. Çĕнтерӳçĕсене хĕрӳллĕн саламлатпăр, ӳлĕмрен те çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх сунатпăр.

***С. БЫКОВА.***

**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** *«Чи лайăх медицина сестри» ята тивĕç пулнă Маргарита Михайловна Наташкина.*

***Сăнӳкерчĕкĕ авторăн.***

**ШКУЛ ХЫПАРĔСЕМ**

## ÇĔНĔ ЙЫШ ХУШĂНЧĔ

Пысăк Упакасси шкулĕнче кĕçĕн класра вĕренекенсем пĕрремĕш класри ачасене вулакансен йышне илчĕç. Оксана Ильинична Наумовапа Светлана Николаевна Васильева вĕрентекенсем тăрăшнипе çак мероприяти питĕ интереслĕ иртрĕ. Юмахсенчен килнĕ тĕрлĕ геройсен сăнарĕсене питĕ аван выляса кăтартрĕç ачасем. Шкул библиотекарĕ Лидия Николаевна Григорьева ачасене тупмалли юмахсем пачĕ. Вĕсене тĕрĕс хуравларĕç пĕрремĕшсем. Юлашкинчен çĕнĕ вулавçăсене пĕчĕк парнесем парса чысларĕç. Вулакансен йышне кĕнĕ май вĕсене çак кĕнекесем питĕ кăсăклантарчĕç. Кашниех ӳлĕмрен библиотекăна хаваспах çул тытĕ.

## КĔРХИ УЯВСЕМ

Нумай пулмасть 5 – 8 классенче вĕренекенсем «Кĕрхи çулçӳрев» мероприяти ирттерчĕç. Тĕрлĕ станцие çитсе курчĕç ачасем. Ачасен маршрутне Е. Г. Григорьева ертсе пычĕ. Акă «Ботанический сад» станци – ачасем часах çулçăсем пуçтарса кĕчĕç те, вĕсен ячĕсене пĕлме тăрăшрĕç, унтан тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсемпе илемлетсе хут çинче клумбăсем ăсталарĕç. Вĕсен тата пукан çине хурса мăйăр шутламалла пулчĕ, мăйăрне куç хупса, пукан çине ларса шутламалла. Ку вара питĕ йывăр та кулăшла пулса тухрĕ. Тĕрлĕ станци витĕр тухма тиврĕ пулин те, йывăрлăхсене çĕнтерчĕç ачасем. Чи хумхантараканни очкосене шутласа, кам çĕнтернине палăртасси пулчĕ. Пĕрремĕш вырăна 8-мĕш класра вĕренекенсем çĕнсе илчĕç. Ыттисем те вĕсенчен юлмарĕç, питĕ активлă пулчĕç.

Аслăрах класенче вĕренекенсем вара «Кĕр уявĕ» ирттерчĕç. Савăнăçлă уявра арçын ачасем маттуртарах пулни палăрчĕ. Уйрăмах Саша Будков, Федор Елдырев, Руслан Ястребов, Саша Кудрявцев. Хĕрсенчен вара чи активлисем – Ольăпа Мария Игнатьевасем, Алевтина Романова тата Валя Краснова.

Акă икĕ командăн кĕрхи «скульптура» ăсталамалла. Ку ĕçе вара пурте питĕ аван турĕç. «Кĕрхи пейзаж» конкурсра та вĕсен пултарулăхĕ курăнчĕ, ӳкерчĕкĕсем витĕмлĕ пулчĕç.

Мĕнпур конкурссем витĕр тухнă хыççăн çакă курăнчĕ: арçын ачасем çĕнтерчĕç! «Мистер Кĕркунне» ята Саша Будков çĕнсе илчĕ, «Мисс Кĕркунне» ята – Оля Игнатьева. Вĕсем призсем илме тивĕç пулчĕç.

***Л. ПАВЛОВА,***
***Пысăк Упакассинчи шкул вожатăйĕ.***

ИЗ АРХИВНЫХ ДОКУМЕНТОВ

# В ПОМОЩЬ ДЕТЯМ

В Год ребенка хочется ознакомить общественность документами из фондов РГУ «Государственный архив современной истории Чувашской Республики», которые расскажут о жизни детей в 20-ых годах XX века.

С 27 мая по 2 июня 1923 года по всей Чувашобласти, по постановлению ВЦИК, проводилась «Неделя беспризорного и больного ребенка». «Неделя» имела «своей целью усилить внимание широких рабочих крестьянских масс к детскому вопросу, оказать реальную помощь детям и заложить к постоянной помощи им».

Газета «Чувашский край» от 19 мая 1923 года писала, что «для проведения «Недели больного и беспризорного ребенка» образована комиссия, в составе председателя т. Михайлова Г.М. и членов от крестьянского комитета взаимопомощи т. Иванова, Женотдела – Григорьевой, Облздрава – Федотовой, Последголода – Краснова, Профсовета – Троицкого, Обоно - Алексеева, Политпросвета - Денисова, Обкома – Матвеева, Союза молодежи – Егорова. Комиссии предложено взять на учет больных и беспризорных детей области. Срок проведения по усмотрению комиссии. Надо надеяться, что все граждане примут в проведении этой недели горячее участие и окажут посильную помощь беспризорному и больному ребенку».

«… Все кто может, должны помочь в эту неделю больному и беспризорному ребенку. Лучшая форма помощи – поддержка существующих учреждений для детей, которые сами в настоящий момент «больны и беспризорны». Эта поддержка может выражаться в самых разнообразных формах: в виде денежных пожертвований, в отчислениях от заработка, в пожертвованиях материалами и предметами ухода для этих учреждений. Союз работников искусств должен помочь в «неделю» постановкой спектаклей и концертов. Союз работников просвещения – агитацией среди населения в пользу беспризорного ребенка. Хозяйственные органы, тресты, торговые предприятия, кооперативы, Земотделы, Комхозы должны поставить себе задачей помочь хозяйственному укреплению детских учреждений путем создания при них мастерских, огородного и полевого хозяйства. Профсоюзы должны выяснить, какие есть перспективы для предоставления старшим детям детучреждений возможности влиться в производства. Пусть ими будет распределена по предприятиям, Совхозам, профшколам, фабзавучам часть тех питомцев детучреждений, которым нужно уже по возрасту покинуть их. Областной комитет «Недели» обращается ко всем учреждениям и организациям Чувашобласти, ко всем рабочим и крестьянам и мужчинам и женщинам, и старым и молодым: Помогите! Спасайте жизнь детей! Не стесняйтесь размером вашей помощи. Каждая жертва, независимо от ее размера – драгоценна. Из малого создается великое…» - читаем на страницах газеты «Чувашский край» от 22 мая 1923 года.


К „Неделе беспризорного и больного ребенка".

Война, разруха и только что закончившийся, еще не совсем изжитый голод оставили после себя ужасное тяжкое наследство. Миллионы семей разорены, распались под ударом этих бедствий, и громадная неисчислимая масса детей осталась беспризорна, без крова, без куска хлеба. Сотни тысяч детей бродят по городам и селам, отупевшие, потерявшие облик человеческий от горя, добывая себе пропитание милостыней. Тысячи и тысячи умирают по дорогам, на вокзалах, в больницах, от истощения, от болезни.

Это—наши будущие граждане, это те, кто сменит нас в работе по строительству новой жизни.

Неужели страна бессильна помочь своим собственным детям, своей надежде, своему будущему.

Государство, напрягая все силы, борется с этим громадным бедствием, но его усилия, усилия только государственных органов недостаточны, чтобы победить его.

Необходимы дружные усилия всех и каждого, необходима срочная немедленная помощь со стороны не только учреждений, но и отдельных граждан.

Для того, чтобы спасти одного ребенка,—этого будущего человека, быть может много ценного несущего миру,—так немного надо. Каждый человек, в ком душа жива, кто не останется равнодушным при виде этих обреченных, страдающих детей, может внести свою лепту помощи в общее дело борьбы с бедствием. Не жертвы, не отречения, а небольшие, почти незаметные отчисления и пожертвования пяти человек способны спасти жизнь одному ребенку. Отчисления и пожертвования 50 чел. дают возможность открыть и содержать детский дом на 15—20 детей.

Если бы все граждане России сознали свой долг, свою обязанность перед погибающими детьми—бедствие было бы изжито сразу.

Каждая жертва, независимо от ее размера—драгоценна. Из малого создается великое.

Неделя борьбы с детской беспризорностью и болезнями обращается ко всем и рабочим и крестьянам, и мужчинам и женщинам, и старым и молодым.

Помогите! Спасайте жизнь детей! Не стесняйтесь размером вашей помощи. Все драгоценно, все необходимо. Несите все, что можете, отдавайте свою энергию, свое слово убеждения на великое благодарное дело спасения детей.

Россия, свободная Россия, не может, не должна равнодушно допускать гибели тысяч ни в чем неповинных детей. Дружным всенародным подъемом мы спасет их.

ВСЕ НА БОРЬБУ С ДЕТСКОЙ БЕСПРИЗОРНОСТЬЮ!

ВСЕ НА ПОМОЩЬ ДЕТЯМ!

Ц. К. „Недели беспризорного и больного ребенка"

(при Комиссии ВЦИК по улучшению жизни детей).

В письме заместителя ответственного секретаря Чувашобкомола всем укомам и Чебоксарскому горрайкому от 21 мая 1923 года говорится, что « голод, постигший в 1921 г. Поволжье и в частности нашу Чувашобласть, оставил после себя глубокие раны и шрамы… Вследствие его беспощадности тысячи семей вынуждены были покинуть родные места и в поиске насущного куска хлеба бежать и в хлебородные губернии. Охваченные голодом и жаждущие жизни отцы и матери, спасая себя от неминуемой голодной смерти, покидали своих детей, обрекая, таким образом, беспомощных и слабых детей на произвол судьбы…. Как одно из последствий голод оставил сотни тысяч беспризорных и беспризорных детей, которые сотнями погибают в непосильной для них борьбе за существование, предоставленные самим себе… Мы все знаем, что сеть дошкольно-воспитательных и лечебных учреждений сильно сократилось и не может приютить под своим кроном всех имеющихся беспризорных и больных детей. Таким образом, остается единственный выход - помощь самих трудящихся масс в этом громадном деле. В этих целях по всей стране проводятся «Недели больного и беспризорного ребенка», каковая у нас в Чувашобласти будет проводиться с 27 мая по 2 июня сего года… Конкретно «неделя» преследует следующие задачи: проведение агитации и пропаганды о помощи беспризорным и больным детям, беседы по вопросам детской гигиены и борьбе с детскими болезнями и физической культуре, произвести сбор пожертвований в помощь ребенку как деньгами, так и продуктами питания, одеждой и другими предметами, организация платных спектаклей, концертов, вечеров…

В Чувашобласти эта компания имеет особенное значение, ибо у нас беспризорность достигла больших размеров и проявляется в различной форме… Необходимо принимать активное участие, имея ввиду, что указанная компания путем агитации и пропаганды должна положить твердый фундамент к постоянной помощи беспризорным и больным детям…».

Газета «Чувашский край» от 2 июня 1923 года писала, что «в Чувашобласти для беспризорных детей имеется 25 детских домов, в них воспитывается 1973 детей; 3 дома матери и младенца, детей в них в настоящее время находится – 73; открываются 2 санатории на 70 человек и 5 яслей на 150 человек. Только в 3 детских домах области имеются оборудованные мастерские – сапожная, столярная и пошивочная. Число беспризорных детей в нашей области – 68835. Последгол выделяет ежемесячно 2900 дополнительных детских пайков. Через комиссию несовершеннолетних при Обоно в 1922 году прошло 32 человек детей, в 1923 году по май месяц прошло 21 человек детей; большая часть преступлений детей - кража».

**НА СНИМКЕ:** листовка «К «неделе беспризорного и больного ребенка».

***Зоя ЛУКИЯНОВА,***
***начальник отдела публикации и использования документов РГУ«Госархив современной истории Чувашской Республики.***

ЗА БЕЗОПАСНОСТЬ ДОРОЖНОГО ДВИЖЕНИЯ

# ВОЖДЕНИЕ БЕЗ ПРАВИЛ – НА КЛАДБИЩЕ ОТПРАВИЛ!

**За 9 месяцев текущего года в районе произошло 19 дорожно-транспортных происшествий (ДТП), что на два меньше, чем за аналогичный период прошлого года. Однако настораживает факт значительного увеличения погибших при ДТП: от 2 до 9, то есть на 350%; раненых от 22 до 25, то есть на 13,6%. Статистические данные сухи, но за каждой смертью и травмой стоит горе родных и близких людей, часто навсегда их потерянные мечты, напрочь сломанные судьбы.**

Причина большей части ДТП - несоблюдение правил дорожного движения, то есть вина водителя. Бывают и другие случаи. Так 11 сентября 2007 года около 21 часа произошло ДТП на автодороге с. Ч.Тимяши – п. Ибреси около примыкания автодороги на с. Х.Батырево Ибресинского района ЧР, при котором погиб пешеход. В ходе проверочных действий было установлено, что пешеход бросился под колеса автомашины с целью суицида, то есть желал покончить жизнь самоубийством. В отношении водителя в возбуждении уголовного дела было отказано, но такие случаи единичны, основной массе водителей в последствии предъявляется обвинение в совершении преступления, предусмотренного ст.264 Уголовного кодекса РФ – «Нарушение правил дорожного движения и эксплуатации транспортных средств».

Приведу несколько примеров из числа находившихся в производстве следователей СО при ОВД по Ибресинскому району уголовных дел. Так 12 июля 2007 года в 23 часа 10 минут находящийся в состоянии алкогольного опьянения водитель автомашины ВАЗ-21079 двигался по автодороге «Аниш» (Канаш-Ибреси-Алатырь) со стороны п.Ибреси Чувашской Республики по направлению к г.Канаш. При этом он грубо нарушил целый ряд пунктов Правил дорожного движения РФ. Нарушение водителем ПДД, выразилось в том, что он находился за рулем автомашины с неработающими с внешней левой стороны световыми приборами, пренебрегая Правилами, был в состоянии алкогольного опьянения, и неподалеку от д. Сюрбеевка, не справившись с управлением, выехал на полосу встречного движения и совершил лобовое столкновение со встречной автомашиной ВАЗ-2115. В результате ДТП несовершеннолетняя пассажирка автомашины ВАЗ-2115, пассажир автомашины ВАЗ-21079 скончались сразу после их доставления в МУЗ «Ибресинская ЦРБ». Другой пассажир автомашины ВАЗ-21079 получил телесные повреждения, которые расцениваются как тяжкий вред здоровью. В настоящее время уголовное дело находится с обвинительным заключением в суде.

05 мая 2007 года около 18 часов находящийся в состоянии алкогольного опьянения водитель автомашины ВАЗ-21101, двигался по автодороге «Аниш» из п.Буинск Ибресинского района по направлению к п.Ибреси. Между разметочным столбом «111 км» и грунтовым съездом в д.Сосновка Ибресинского района этот водитель грубо нарушил ряд пунктов Правил дорожного движения РФ: находился за рулем автомашины в состоянии алкогольного опьянения, превысил установленную на данной дороге скорость движения в 90 км/ч, выехал на обгон движущегося впереди транспортного средства с правой стороны с заездом на обочину и не справившись с управлением совершил опрокидывание в кювет. В результате дорожно-транспортного происшествия пассажирка автомашины ВАЗ-21101 скончалась сразу после доставления в МУЗ «Ибресинская ЦРБ». Судом водителю назначено 1,5 года лишения свободы с отбыванием наказания в колонии-поселении.

В октябре, а именно 04.10.2007 года, старшим следователем СО при ОВД по Ибресинскому району было возбуждено уголовное дело по ст.264 ч.2 УК РФ в отношении неустановленного лица, которое 01.10.2007 года в период с 11 до 12 часов управляя неустановленной легковой автомашиной на автодороге ул.Энгельса п. Ибреси в районе торговой базы Ибресинского РАЙПО совершило наезд на пешехода, причинив ему телесные повреждения, от которых тот впоследствии скончался. В настоящее время лицо, совершившее наезд, установлено, проводятся следственные действия.

И уже 12 октября 2007 года около 22 часов 30 минут на автодороге Хормалы – Н.Чурашево Ибресинского района ЧР водитель автомашины «Мицубиси Лансер» решил покататься со знакомыми девушками и другом. Находившемуся в состоянии алкогольного опьянения водителю сотрудники ОГИБДД дали знак остановиться. Однако тот законные требования инспектора ДПС не выполнил и на скорости около 140-160 км/час пытался скрыться. Одна из девушек просила водителя остановить автомашину, тот не послушался и в результате, не справившись с управлением, совершил опрокидывание в кювет. Пассажиры получили телесные повреждения различной степени тяжести.

Как видно из приведенных примеров, в большей части причинами ДТП являются:

1. Алкогольное опьянение водителя, при котором в значительной степени снижается реакция, теряется контроль дорожной ситуации, водитель начинает совершать безответственные поступки.

2. Превышение ограничения скорости движения. В большей мере это касается водителей, находящихся в состоянии опьянения, водителей с небольшим опытом вождения.

